**Шур Атӑлта акӑш ярӑнать...**

Шур Атӑлта акӑш ярӑнать,
Ҫамрӑк пике евӗр курӑнать.
Ай-хаях, савниҫӗм, хура куҫ,
Ҫавӑ шурӑ акӑш эсӗ мар-ши тетӗп?

Хурӑнлӑхра шӑпчӑк юр юрлать,
Пике сасси евӗр туйӑнать.
Ай-хаях, савниҫӗм, хура куҫ,
Ҫавӑ сарӑ шӑпчӑк эсӗ мар-ши тетӗп?

Сад пахчинче мӑкӑнь ҫурӑлать,
Пике кулнӑ евӗр туйӑнать.
Ай-хаях, савниҫӗм, хура куҫ,
Ҫавӑ хитре мӑкӑнь эсӗ мар-ши тетӗп?

Чӑн тӳпере ҫӑлтӑр ҫуталать,
Пике куҫӗ евӗр йӑлкӑшать.
Ай-хаях, савниҫӗм, хура куҫ,
Ҫавӑ ҫутӑ ҫӑлтӑр эсӗ мар-ши тетӗп?

1938

*Тукташ, И. Шур Атӑлта акӑш ярӑнать...: [сӑвӑ] / И. Тукташ // Чӑваш сӑмахлӑхӗ : 10-мӗш класӑн вӗренӳпе вулав кӗнеки / Н. Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатӗрленӗ. – Шупашкар, 1996. – II пай. – С. 222.*